# Илемлĕ чăваш тĕрри

**Валери ТУКТАР** сăвви
**Геннадий САДОВНИКОВ** кĕвви




1. Илемлĕ чăваш тĕрри
Илентерет куçсене.
Эрешлĕ чăваш тĕрри
Тĕлĕнтерет тĕнчене.

*Хушса юрламалли:*
*Илемлĕ, илемлĕ,*
*Илемлĕ чăваш тĕрри*
*Тĕрлеме пĕлсен кăна.*

2. Асамлă чăваш тĕрри
Хăватлă асамĕпе.
Çыруллă чăваш тĕрри,
Чаплă вăл çырăвĕпе.

*Хушса юрламалли:*

3. Илемлĕ чăваш тĕрри
Çĕр пин тĕслĕ тĕсĕпе.
Илемлĕ чăваш тĕрри
Ытарайми сăнĕпе.

*Хушса юрламалли:*